Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнченпе тухать

*64 (8228) №* ✻ *Юн кун, 2014 çулхи çурла (август) уйăхĕн 27-мĕшĕ* ✻ *Хакĕ ирĕклĕ*

**Кĕр мăнтăрĕ – кашни алăра**

## Çурла уйăхĕ çимĕçпе пуян



**Историе пăхаканшăн иртнине пĕлмесĕр малашлăх çук. Халăх пурнăçĕпе пурăнакан вара асатте-асаннесен ырă йăли-йĕркине малалла тăсма тăрăшать. "Çак икĕ чăнлăха та ырламалла кăна. Вĕсенчен пирĕн кулленхи пурнăç йĕркеленсе пырать. Çĕр ĕçĕнче аслă ăрусен ырă енĕсене малалла тăсса иртнерĕ çу кунĕсем сĕтел çине паян пуян çимĕçпе çаврăнса çитрĕç. Кĕр мăнтăрĕ кăçал пире савăнтарать. Малашлăха пăхаканăн çуллен çапла пулмалла", – терĕ çурла уйăхĕ спассемпе пуяннине палăртса Йӳçкасси ял тăрăхĕнчи Вăрманкассинчи Федор Васильев ячĕпе хисепленекен историпе краеведени музейĕн директорĕ Надежда Яковлева (сăн ӳкерчĕкре сулахайран иккĕмĕшĕ).**

**Йӳçкасси ял тăрăхĕнчи культура сферин ĕçченĕсем Культура çулталăкне çак уйăхра пыл тата пан улми спасĕсене халăха килĕшӳллĕ уявланипе палăрчĕç. "Умра – виççĕмĕш спас – мăйăр спасĕ", – терĕ асăннă уяв çурла уйăхĕн 29-мĕшĕнче пулнине палăртса Йӳçкасси ял библиотекарĕ А. Димитриева (сăн ӳкерчĕкре сылтăмран иккĕмĕшĕ) пĕрле тăракан ял тăрăхĕнчи культура ĕçтешĕсен халăхпа ĕçлес ĕмĕчĕсем пысăккине палăртса.**

**А. БЕЛОВ сăн ӳкерчĕкĕ.**

**Республикăра**

## Чукун çул ыйтăвĕсемпе

Чăваш Республикин Пуçлăхĕ М. Игнатьев августăн 21-мĕшĕнче – "РЖД" акционерсен уçă пĕрлешĕвĕн филиалĕн Чул хулари чукун çулсен пуçлăхĕпе Анатолий Лесунпа ĕçлĕ тĕл пулу ирттернĕ.

Республика Пуçлăхĕ хăнана Чăваш Республикине тимлĕх уйăрнăшăн тав тунă. Чул хула чукун çулĕсемпе тачă çыхăнура килĕштерсе ĕçлени "РЖД" услугисемпе усă куракан Чăваш Енре пурăнакан çынсемшĕн меллĕ пулнине палăртнă.

А. Лесун Гремячево станцийĕнче пулса унта авари хыççăн пĕтĕмпех тирпейленине хăй курса ĕненнине, çав вырăнта экологи тĕлĕшĕнчен хăрушлăх тухса тăманнине каланă. Чул хула чукун çулĕсем çинчи çул урлă каçмалли вырăнсенче кăçал 26 хутчен чрезвычайлă лару-тăру пулнине, вĕсенче 10 çын вилнине пĕлтернĕ. Инкексем ытларах чух водительсен айăпĕпе пулнине палăртнă.

Чул хула чукун çулĕсен пуçлăхĕ Чăваш Енре аварисене сирес тĕллевпе лайăх ĕçленине палăртнă. Чукун çул урлă каçмалли вырăнсене хăрушсăрлăхпа тивĕçтерессинче малашне те пулăшма шантарнă. Кунпа пĕрлех А. Лесун Канаш хулинче "РЖД" пĕрлешӳре вăй хуракансем валли нумай хваттерлĕ çурта мĕнле хăпартнипе паллашнă. Сентябрьте хута яма палăртнă çурта пурăнма куçакансене хваттер уççисене парас церемоние М. Игнатьева хутшăнма йыхравланă.

Тĕл пулура "Раççей – спорт çĕр-шывĕ" Пĕтĕм тĕнчери спорт форумне тата РФ Президенчĕ çумĕнчи физкультурăпа спорта аталантарассипе ĕçлекен канашăн ларăвне хутшăнакансене транспортпа тивĕçтерессине тата ытти хăш-пĕр ыйтăва сӳтсе явнă.

**Тăван ен тирпейлĕхĕшĕн**

## Субботника хутшăнар

Экологи хăрушлăхĕ пирки паян чылай калаçатпăр. Нумай тавлашу пырать ку ыйту тавра, анчах лав вырăнтан тапранни курăнмасть. Çурла уйăхĕн 30-мĕшĕнче Пĕтĕм Раççейĕпе ирттерекен экологи субботникĕ çакăнта ырă пуçару тăвасса шанатпăр.

Çак субботникран Муркашсем те катара юлмĕç тесе шутлатпăр. Хамăр тирпейлĕх – хамăр алăра. Асăннă кун кашни предприяти-организацире, ĕç коллективĕнче хамăра хупăрлакан тăван тавралăха тирпейлесе хăт кĕртессипе субботник иртермелле.

**Район уй-хирĕсенче**

**ВЫРМА**

Районти оперативлă кăтартусемпе августăн 26-мĕшĕ тĕлне хăш-пĕр хуçалăхсем вырма ĕçĕсене вĕçлерĕç. Вĕсен шутĕнче: "Восток", "Оринино" хуçалăхсемпе "Картофель агросоюз" общество тата А. Толстов хресчен (фермер) хуçалăхĕ.

Районĕпе тĕш тырăн гектар пуçне тивекен вăтам тухăçĕ – 22,1 центнер. Çав вăхăтрах çĕр ĕç технологине çирĕп пăхăнакан тата çĕнĕлĕхсемпе туллин усă куракан Ильич яч. хис., Е. Андреев яч. хис., Чкалов яч. хис., Суворов яч. хис. хуçалăхсен уйрăм хирĕсенче вăл кăтарту 25 – 38 центнерпа танлашать.

**КĔР АКИ**

Хуçалăхсем кĕр аки ирттерессипе тăрăшса ĕçлеççĕ. Ĕнерхи кун тĕлне районĕпе 3162 гектар кĕртрисем акнă.

**ÇĔР УЛМИ**

"Ударник" хуçалăх çĕр улми кăларма тухнă. Йӳçкассисем çак ĕçе 4 гектар çинче пурнăçланă. Вăтам тухăç – гектар пуçне 120 центнер.

**Хамăр инф.**

**Вĕренӳ**

## Августри конференцире

Иртнĕ çулти ĕç-хĕле пĕтĕмлетме, ӳсĕмсемпе çитĕнӳсене хаклама йăлана кĕнĕ тăрăх вĕрентекенсем кашни çулах хăйсен августри конференцине пухăнаççĕ. Республика шайĕнчи конференци кăçал Шупашкарта августăн 21–22-мĕшĕсенче иртрĕ. Педагогсем математика тата çут çанталăк ăслăлăхĕпе çыхăннă предметсене вĕрентессин пахалăхне ӳстерессси пирки тĕплĕн калаçнă.

Чăваш Ен Пуçлăхĕ М. Игнатьев та конференци ĕçне хутшăннă. Вăл республикăри вĕренӳ тытăмĕ юлашки çулсенче лайăх аталанса пынине палăртнă, 2013 çулта бюджетран кашни виççĕмĕш тенкине вĕренӳ çине янине пĕлтернĕ.

Михаил Игнатьев республикăри педагогсене ĕçченлĕхшĕн, ăсталăхшăн, ĕçе парăннăшăн тав тунă, ăнăçу суннă. Çакăнпа пĕрлех вăл тивĕçлисене патшалăх наградисем парса чысланă.

Республика конференцийĕ хыççăн çак кунсенче кашни муниципалитетри педагогсем уйрăммăн пухăнса тĕрлĕ ыйту сӳтсе яваççĕ, математикăпа çут çанталăк ăслăлăхĕпе çыхăннă предметсене вĕрентессинче пĕр-пĕрин опычĕпе паллашаççĕ.

Пирĕн районти вĕрентекенсем хăйсен черетлĕ конференцине ĕнер, августăн 26-мĕшĕнче, пухăнчĕç. Вăл Шурчари тĕп шкулта иртрĕ. Тĕплĕнрех – çитес номерте.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

**"Кĕр парнисем – 2014"**

## Ярмăрккăна чĕнеççĕ

Ял çыннипе Шупашкар хули хушшинчи туслă çыхăнăва малалла аталантарассине тĕпе хурса республика тĕп хулинче иртнĕ шăмат кун "Кĕр парнисем – 2014" уйăхлăх ĕçлеме пуçларĕ. Вăл юпа уйăхĕн 26-мĕшĕччен пырĕ.

Асăннă ярмăрккă – юлашки çулсенче кун йĕркине кĕнĕ ырă пулăм. Çакă ыт ахальтен пулманнине тата ярмăрккă уссине Муркашсем çулленех унта активлă хутшăнса çирĕплетсе параççĕ.

Маларах каланине шута илсе ял çыннисене тата пĕрлешӳллĕ хуçалăхсемпе хресчен (фермер) хуçалăхĕсене "Кĕр парнисем – 2014" ярмăрккă суту-илĕвĕ хăш вырăнсенче иртни пирки хыпарлатпăр:

1. Калинин районĕнчи 324-мĕш стрелковăй дивизи урамĕнчи 22-мĕш çурт адресĕпе вырнаçнă "Дар" ял хуçалăх пасарĕн территорийĕ;

2. Николаев ячĕллĕ урамри 14 "а" адреспа вырнаçнă "Николаевский" суту-илӳ комплексĕн территорийĕ;

3. Мускав районĕнчи Мускав проспекчĕ 40 "а" адреспа вырнаçнă "Северная" суту-илӳ компанийĕн территорийĕ.

Асăннă пасарсене суту-илĕве тухас текенсен хула администрацине заявка тăратмалла. Унта хутшăнаканăн ятне, мĕнпе сутă тăвассине кăтартмалла.

– Хула çыннисене ял хуçалăхĕн паха продукцийĕпе тивĕçтерни савăнтарать. Муркашсен продукцине вара эпир яланах мала хуратпăр. Паян та пан улмипе симĕс сухан тата шăратнă çăва Муркашсеннех туянтăмăр. Тĕнчери лару-тăру хамăрăн хресченĕн продукцине кĕтет, – тенĕччĕ иртнĕ çулхи ярмăрккăра Муркашсен киоскĕ умĕнчен тулли сумккăпа уйрăлнă хула çыннисем.

**А. ПЕТРОВ.**

**Çырăнтару – 2015**

## Республикăра – иккĕмĕш



**"Çĕнтерӳ ялавĕ" хаçат август уйăхĕнче 4659 экземплярпа пичетленет. Республикăри райхаçатсем хушшинче ку – иккĕмĕш кăтарту. Патăрьел районĕнчи "Авангард" 5 пине яхăн экземплярпа тухать. Етĕрне районĕнчи "Ĕç ялавĕ" – 4600 экземплярпа.**

**Хаклă вулакансем! "Çĕнтерӳ ялавĕ" хаçата 2015 çулхи январь уйăхĕнчен илсе тăма çырăнтарма пуçларĕç. Яланхи çыхăнăва татар мар, малашне те пĕрле пулар. "Çĕнтерӳ ялавĕ" 70 çул ытла вулаканпа тĕл пулма васкать.**

**Хаçат редакцийĕ.**

**Саламлатпăр**

Муркаш ял тăрăхĕнчи Çĕньял Муркашра пурăнакан юратнă хĕре, аннене, йăмăка, аппана, хаклă тăвана – **Людмила Васильевна КРОЛЬКОВĂНА** – 50 çул тултарнă ятпа чĕререн саламлатпăр. Эсĕ ĕçрен ютшăнманни, ачусемпе çывăх тăванусене пулăшма ялан хатĕр пулни тата вăй çитнĕ чухлĕ пулăшни сана Çĕр çинче Турă панă çул-йĕр тесе шутлатпăр. Çак çулпа утса санăн татах нумай çул ырă курса, пире савăнтарса тата пирĕн савăнăçпа хăвăн хĕпĕртесе пурăнмалла пултăр.



Тав сана пуриншĕн те чунтан,
Эсĕ хаклă кĕмĕл-ылтăнран,
Эс пурри пире савăнтарать,
Пурăнма вăй-хал парса тăрать.

**Салампа: амăшĕ, ывăлĕпе хĕрĕ, Алексеевсен, Вязовсен, Андреевсен, Колбасовсен, Васильевсен çемйисем.**

**Приглашаем**

27 августа 2014 г. ОАО "Страховая компания "Чувашия-Мед" в с. Моргауши проводит выездное мероприятие по защите прав застрахованных граждан.

Приглашаем жителей села и района, застрахованных в ОАО "СК "Чувашия-Мед", на консультации по обеспечению гарантированной качественной медицинской помощью в БУ "Моргаушская центральная районная больница" и других медицинских организациях Чувашской Республики. Прием ведут врачи (специалисты-эксперты) отдела контроля качества медицинской помощи ОАО "СК "Чувашия-Мед" в актовом зале поликлиники БУ "Моргаушская центральная районная больница" Минздравсоцразвития Чувашии с 10.00 до 12.00.

Приходите или задавайте свои вопросы по телефону бесплатного дозвона: 8-800-250-02-26.

Спорт

## Япӑх мар кӑтартусемпе

Швейцарири Цюрихра ҫӑмӑл атлетика енӗпе иртнӗ Европа чемпионачӗ вӗҫленчӗ. Раҫҫейӗн пӗрлештернӗ командинче пирӗн республикӑн 6 спортсменӗ спортӑн тӗрлӗ енӗпе тупӑшрӗ: Елена Наговицина 10 ҫухрӑм чупассинче, Анжелика Сидорова шӑччӑпа сикессинче, Вера Соколовӑпа Александр Яргунькин 20 тата 50 ҫухрӑм хӑвӑрт утассинче, Наталья Пучковӑпа Альбина Майорова марафон чупӑвӗнче.

Пирӗн спортсменсен кӑҫалхи Европа чемпионатӗнчи ҫитӗнӗвӗсем малтанхи ҫак ӑмӑртусенчи кӑтартусенчен лайӑхраххине палӑртаҫҫӗ. Акӑ Анжелика Сидорова шӑччӑпа сиксе 4 м та 65 см ҫӳллӗше парӑнтарма пултарнӑ, чемпионат ҫӗнтерӳҫи пулса тӑнӑ.

Наталья Пучковӑпа Альбина Майорова тепӗр икӗ спортсменпа пӗрле команда зачечӗ тӑрӑх бронза медальсене тивӗҫнӗ.

Шел пулин те, Вера Соколова 20 ҫухрӑм хӑвӑрт утса финиша тӑваттӑмӗш ҫитнӗ, Александр Яргунькин 50 ҫухрӑмра – 14-мӗш. Стайер чупӑвӗн тупӑшӑвне хутшӑннӑ Елена Наговицина 10 ҫухрӑмлӑ дистанцире вуннӑмӗш пулнӑ.

Пӗтӗмпе Раҫҫей спортсменӗсем 22 медале тивӗҫнӗ, медаль зачечӗн пӗтӗмлетӗвӗпе тӑваттӑмӗш вырӑн йышӑннӑ.

Европа чемпионатне Чӑваш Ен делегацийӗ те ҫитсе килнӗ. Ӑна спорт министрӗ Сергей Мельников ертсе пынӑ, ушкӑнра 2015 ҫулта ҫӑмӑл атлетика енӗпе Шупашкарта ирттерме палӑртнӑ Европӑн команда чемпионачӗн йӗркелӳ комитечӗн членӗсем те пулнӑ. Вӗсем Цюрихра иртнӗ чемпионатӑн опычӗпе паллашнӑ, ӗҫлӗ ларусене хутшӑннӑ.

Райадминистрацире

## Хисеп грамотипе наградӑланӑ

***Район администрацийӗн 2014 ҫулхи августӑн 5-мӗшӗнчи 785 № йышӑнӑвӗпе ҫаксене район администрацийӗн Хисеп грамотипе наградӑланӑ:***

1. Районти строительство комплексне аталантарма тӳпе хывнӑшӑн тата нумай ҫул хушши тӑрӑшса вӑй хунӑшӑн:

– **Владимир Витальевич ГРИГОРЬЕВА**, Муркашри кирпӗч завочӗн водительне;

– **Валерий Петрович КИСЕЛЕВА**, хуҫалӑхсем хушшинчи "Моргаушская" строительство организацийӗн трактористне;

– **Юрий Георгиевич ЛЮБИМОВА**, Муркашри кирпӗч завочӗн электрогазосварщикне;

– **Галина Ильинична ПАВЛОВӐНА**, хуҫалӑхсем хушшинчи "Моргаушская" строительство организацийӗн штукатур-малярне;

– **Владимир Петрович САВАТЕЕВА**, Муркашри кирпӗч завочӗн электромонтерне;

– **Радислав Аркадьевич ТИХОНОВ**А, Муркашри кирпӗч завочӗн электрогазосварщикне.

2. Ял хуҫалӑх производствинче нумай ҫул хушши тӑрӑшса вӑй хунӑшӑн:

– **Ираида Михайловна ЕГОРОВӐНА**, "Оринино" ял хуҫалӑх производство кооперативӗн специалистне;

– **Вячеслав Николаевич ЗАМКОВА**, "Оринино" ял хуҫалӑх производство кооперативӗн трактористне.

Ӗҫре тӑрӑшуллисем



## Вӗренекенсен аталанӑвӗшӗн тимлет

Вӗрентекенӗн вӗренӳ ҫулӗнче кӑна мар, ҫуллахи каникулта та ӗҫ туллиех: июнь–июль уйӑхӗсенче акӑ кашни шкултах сывлӑха ҫирӗплетмелли тата профиль лагерӗсем ӗҫлерӗҫ. Паллах, воспитательсем вырӑнӗнче вӗрентекенсем вӑй хучӗҫ.

Чуманкассинчи вӑтам шкулта пуҫламӑш классене вӗрентекен Альбина Вячеславовна Васильева та хӗрӳ вӗренӳ ҫулӗ хыҫҫӑн шкул ҫумӗнче йӗркеленӗ лагерьте ачасен сывлӑхне, вӗсен тавра курӑмне аталантарас тесе тӑрӑшакансенчен пӗри пулчӗ. Альбина Вячеславовнӑна ачасемпе тӗрлӗ ӗҫ пурнӑҫлама вара хӑй районти ачасен пултарулӑх ҫурчӗн хушма пӗлӳ паракан вӗрентекенӗ пулни те нумай пулӑшнӑ. Чӑваш патшалӑх педагогика институтне вӗренсе пӗтернӗ учитель спортпа та туслӑ, ҫавӑнпах вӑл ачасем ӑс-тӑн енчен кӑна мар, ӳт-пӳ енчен те тӗрӗс-тӗкел аталанччӑр тесе те нумай тимлет.

Активлӑ вӗрентекен ачасене чылай конкурса хутшӑнма явӑҫтарать, професси опытне пуянлатас тӗллевпе хӑй те конкурссене хутшӑнать. Кӑҫал акӑ районти "Чи лайӑх класс ертӳҫи" конкурса хутшӑнса призлӑ вырӑн йышӑнма пултарчӗ. Халӗ вара Альбина Вячеславовна "хӑйӗн" пепкисене тӑваттӑмӗш класа йышӑнма хатӗрленет.

**Н. НИКОЛАЕВА сӑн ӳкерчӗкӗ.**

# Ачасемпе ҫула тухма хатӗр

**"Пирӗн районти шкул автобусӗсем ачасемпе ҫула тухма хатӗр", – ҫапла пӗтӗмлетӳ турӗ тӗрӗслев комиссийӗ.**

Автобуссене техосмотр тӑратнипе страховка пуррине кӑна мар, водительсем, автобуспа ачасене шкула тата шкултан ӑсатакан вӗрентекенсем ятарлӑ вӗренӳ курсӗсене вӗренсе пӗтернине те тӗрӗслерӗҫ патшалӑх ҫул-йӗр хӑрушсӑрлӑх инспекцийӗн районти уйрӑмӗн пуҫлӑхӗ С. Иванов тата А. Щербаков инспектор. Ҫакӑнпа пӗрлех йӗркипе лартса тухнӑ кашни транспорт патне ҫитсе кашни водительпе уйрӑммӑн та, вӗсене пӗрле пухса та ачасене турттарассипе, уйрӑмах хӑвӑртлӑх режимне пӑхӑнассипе асӑрхаттару калаҫӑвӗ те ирттерчӗҫ.

Пассажирсене турттаракан транспортпа ӗҫлекен водитель ӗҫӗ ахаль те ответлӑхпа палӑрса тӑрать, шкул автобусӗн водителӗ пуласси вара тата ответлӑрах. Ҫакӑнпа пӗрлех унӑн ҫирӗп дисциплинӑллӑ, сиенлӗ йӑласемсӗр, ырӑ кӑмӑллӑ та пулмалла.

Чуманкассинчи вӑтам шкулта ГАЗельпе ачасене турттаракан Николай Данилов – шӑпах ҫавӑн йышшисенчен. Шкулти водительте ӗҫлеме тытӑннӑранпа унӑн 7 ҫул ҫитнӗ ӗнтӗ. "Ӗҫӗ питӗ ответлӑ, ҫапах ачасемпе ӗҫлеме кӑмӑллӑ, интереслӗ. Вӗсене шкул тулашӗнчи чылай ӑмӑртӑва, конкурссене те илсе тухатпӑр, ҫитӗнӗвӗсене куратпӑр, пӗрле савӑнатпӑр", – терӗ вӑл унран ӗҫ йывӑрлӑхӗ пирки кӑсӑклансан. Муркаш шкулӗнче водительте ӗҫлекен Юрий Ванюшкин шкул автобусӗн рулӗ умӗнче вара 10 ҫула яхӑн. Николай Шариков Москакассинчи шкулта автобус водителӗнче иккӗмӗш ҫул кӑна вӑй хурать-ха, водитель стажӗ вара унӑн 1968 ҫултанпах пырать. Ҫак шкулти социаллӑ педагог Елена Поркина каланӑ тӑрӑх шкул автобусӗпе ӗҫлеме килӗшекенсене тупма ҫӑмӑлах мар иккен – "требованисем пысӑк". "Юрать-ха Николай Данилович пирӗнпе ӗҫлет. Унпа эпир ҫула яланах шанчӑклӑ тухатпӑр. Питӗ йӗркеллӗ ҫын", – тет вӑл.

Хӑйсен ӗҫне ответлӑхпа пурнӑҫлакан районти 18 водитель ҫитес вӗренӳ ҫулӗнче каллех кашни кун 98 ялти 960 ытла ачана шкула турттарӗ, унтан килӗсене леҫӗ. Ҫул ҫинче асӑрханулӑхпа тимлӗх кирлине вӗсем яланах асра тытаҫҫӗ, ҫакӑн пирки тата общество транспортӗнче хӑйсене мӗнле тытмаллине ачасене тӑтӑшах аса илтереҫҫӗ.

Вӗренӳ ҫулӗ умӗн





Водительсен те, ҫуран ҫӳрекенсен те ҫул-йӗр правилисене ҫирӗп пӑхӑнмалла, вӗсене пӗлмелле. Акӑ иртнӗ кунсенче, августӑн 21–22-мӗшӗсенче, пирӗн районта иртнӗ "Пешеход" асӑрхаттару мероприятийӗ вӑхӑтӗнче йӗркене пӑснӑ 7 тӗслӗх палӑртнӑ: 6 водитель ҫуран ҫӳрекене ҫул паман, 1 ҫуран ҫӳрекен ҫул урлӑ каҫма юраман вырӑнта каҫнӑ. Мероприяти вӑхӑтӗнче ҫул-йӗр хӑрушсӑрлӑх инспекцийӗн сотрудникӗсем ҫул урлӑ каҫмалли вырӑнсене те тӗрӗсленӗ. Ҫитменлӗхсем тупса палӑртнӑ икӗ тӗслӗхе пӗтерме ҫав ҫулсене пӑхса тӑракан организацисене асӑрхаттарусем тӑратнӑ.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

**Сӑн ӳкерчӗксенче: акӑ вӗсем – ответлӑ ӗҫе пурнӑҫлакансем; ГИБДД районти уйрӑмӗн пуҫлӑхӗпе С. Ивановпа район администрацийӗн вӗренӳ пайӗн хуҫалӑхпа эксплуатаци ушкӑнӗн ертӳҫи Н. Андреева тӗрӗслев ирттереҫҫӗ.**

# Ӗмӗрех асӑмра

Пирӗн почта

Район историйӗ – уйрӑм ҫынсен тӑрӑшуллӑ ӗҫӗ, шаннӑ ӗҫри вӗсен ӳсӗмӗ, малашлӑх утӑмӗ. Ҫак сӑмахсене ҫыратӑп та куҫ умӗнчен Сергей Афанасьевич Афанасьев сӑнарӗ каймасть. Ҫӗр ӗҫӗн аксакалӗ пирӗнтен уйрӑлса кайнӑранпа хӗрӗх талӑк иртрӗ. Чиркӳ йӗркипе халӑхра ҫак вӑхӑта уйрӑммӑн асӑнса паллӑ тӑваҫҫӗ...

Ҫулсем иртеҫҫӗ пулин те, ырӑ вӑхӑтсем асрах упранаҫҫӗ. Эпӗ те хамӑн ҫӗр ӗҫӗнчи ытларах вӑхӑта унпа пӗрле ӗҫлесе ирттертӗм. Ҫавӑнпа та унӑн хисеплӗ ятне чӗрере упрани пирки паянхи сӑмахӑмра уйрӑммӑн палӑртса хӑварас тетӗп.

Сергей Афанасьевич "Сеятель" хуҫалӑха пӗр улшӑнмасӑр 19 ҫул ертсе пычӗ. Хыҫҫӑнхи ҫулсенче район шайӗнче ӗҫленӗ вӑхӑтра та тӑван колхозпа ҫыхӑну татмарӗ. Вӑл ҫулсенче Нискассипе Ярославка тата Чемей тӑрӑхӗсем тӗпрен ҫӗнелсе вӑй илчӗҫ. Ҫӗнӗлӗхсемпе туслашнӑ ӗҫченсем ял хуҫалӑх производствине аталанӑвӑн ҫӳллӗ шайне кӑларчӗҫ. Хуҫалӑх ӗҫченӗсен пурнӑҫ условийӗсем те ырӑ енне улшӑнчӗҫ. Анчах вӑхӑт кустӑрми ҫулсене историе хӑварса пырать. С. Афанасьев ӗҫленӗ ҫулсем хыҫҫӑн "Сеятель" тата "Чемеево" хуҫалӑхсем уйрӑмшарӑн та ӗҫлесе пӑхрӗҫ. Иртнӗ ӗмӗрӗн 90-мӗш ҫулӗсенче кунта нумай ертӳҫӗ улшӑнчӗ. Председательпе председатель улшӑнни хуҫалӑхсене малалла каймашкӑн памарӗ. Халӗ ӗнтӗ ҫав хуҫалӑхсем панкрут йӗркипе ӗҫлеме пӑрахрӗҫ. Нумай хире, унчченхи вӑхӑтра ӗҫ шавӗ тӑнӑ фермӑсене ҫум курӑкӗ хупласа илчӗ. Ҫакна курса тӑнӑран тухӑҫлӑ ӗҫленӗ ҫулсем тӑтӑшах аса килеҫҫӗ...

Иртнӗ ӗмӗрӗн 60-мӗш ҫулӗсенче районти колхозсемпе совхозсене специализаци йӗркипе ӗҫлеттерме йышӑнчӗҫ. Ҫавӑн чухне ӗнтӗ хуҫалӑхсем хӑмла, пахча ҫимӗҫ, ҫӗр улми, аш-какайпа сӗт туса илессипе тӗллевлӗ ӗҫлеме пуҫларӗҫ. Сергей Афанасьевич хӑй ертсе пыракан хуҫалӑхра аш-какайпа сӗт туса илессине тата тырӑ-пулӑ тухӑҫлӑ ӳстерессине йӗркелерӗ. Пурнӑҫланайман ӗмӗтсем пулман вӗсем. Икӗ-виҫӗ ҫул хушшинче пин пуҫ сысна тытмалӑх, 400 пуҫ сумалли ӗне вырнаҫмалӑх фермӑсем ҫӗкленчӗҫ, вӗсене шывпа тивӗҫтерме шыв башнисем ӗҫлеме пуҫларӗҫ. Ялта пурӑнакансем валли вуншар ӗҫ вырӑнӗ уҫӑлчӗ.

Хуҫалӑх ӗҫӗсене ҫамрӑксене ытларах явӑҫтарасси те С. Афанасьевӑн яланхи тӗллевӗччӗ. Ӑна пурнӑҫа кӗртессишӗн тӑрӑшсах вӑл ӗҫленӗ ҫулсенче Нискасси–Ярославка тӑрӑхӗнче пиллӗк тата икӗ хутлӑ нумай хваттерлӗ ҫуртсем ҫамрӑк ҫемьесене йышӑнчӗҫ. Ҫак ҫуртсем тӗлӗнче вылякан йышлӑ ача-пӑча ҫине пӑхма кӑмӑллӑччӗ.

Колхоз лавне кӳлӗннӗ Сергей Афанасьевич кӗске вӑхӑтрах хӑйӗн мал туртӑмлӑ ӗҫӗпе Раҫҫейре те ырӑпа палӑрма ӗлкӗрчӗ. Хӑйӗн килӗнче пулнӑ чух вӑл мана Никита Сергеевич Хрущевпа тата Леонид Ильич Брежневпа ушкӑнпа ӳкерттернӗ сӑн ӳкерчӗксене кӑтартни халӗ те куҫ умӗнчех. Хӑй каласа кӑтартнинчен ҫак сӑн ӳкерчӗксене Н. Хрущевпа Раҫҫейре малта пыракан ял хуҫалӑх ертӳҫисемпе пӗрле, Л. Брежневпа Раҫҫей Федерацийӗн Совечӗн депутачӗ пулнӑ чухне туни паллӑ пулчӗ. Ҫаксем йӑлтах хресчен ачин ҫӗр ӗҫӗнчи ӳсӗмне кӑтартаҫҫӗ.

– Ха! Ҫулсем иртеҫҫӗ, – терӗ вӑл пӗррехинче шахвӑртса. – Михаил Горбачевпа сӑн ӳкерттереймерӗм.

Ҫапла ертӳҫӗ пулчӗ вӑл, Сергей Афанасьевич, нумай ырӑ улшӑнусем пурнӑҫа кӗртнипе халӑх асӗнче юлчӗ.

Аса илӳсен ҫӑмхине сӳтнӗ май пӗр ҫулхине Шупашкарта вырма умӗн иртнӗ республикӑри конференцире пӗр пуҫлӑх калани ӗнерхи пекех асра:

– Ял хуҫалӑх производствинче ҫӗр ӗҫне чунӗпе парӑннӑ ҫынсем пурри республикӑна малалла аталантарать. Муркаш районӗнче паллӑ та пултаруллӑ ҫӗр ӗҫченӗ, ял хуҫалӑх корифейӗ Сергей Афанасьев пур, – терӗ вӑл халӑх умӗнче унтан тӗслӗх илмелли нумай пулнине палӑртса.

Ку чӑнах та ҫапла пулнӑ. Эпӗ унпа 15 ҫул пӗрле ӗҫлесе унӑн енӗсене лайӑх вӗренсе ҫитрӗм. Унӑн ӗҫри тата пурнӑҫри тӗп тӗллевӗсем ҫаксемччӗ:

– ӗҫре хушу илтӗн пулсан унталла-кунталла турткаланмасӑр тӳрех ӗҫе кӳлӗн;

– ӗҫ вӑхӑчӗн кашни минучӗпе туллин усӑ курма тӑрӑш;

– ӗҫе кун ирттӗр тесе ячӗшӗн пурнӑҫламалла мар, пурнӑҫланӑ ӗҫӗн пахалӑхӗ 100 процент е ытларах та пултӑр.

Ҫакӑн пек пурӑнать ман асра Сергей Афанасьевич. Унӑн ӗҫри принципӗсене эпӗ паян та тытса пыма тӑрӑшатӑп, ыттисене те ҫавнах сӗнетӗп. Ку йӗркепе пурӑнсан паян та малалла аталанма майсем пур.

**Н. ПЕТРОВ.**

Нискасси ялӗ.

Кĕçех – шкула

# Ветерансем вĕренӳ учреждениййĕсенче пулчĕç

Çĕнĕ вĕренӳ çулĕччен вăхăт нумаях та юлмарĕ. Юлашки виçĕ çулта республикăри шкулсене вĕренӳ кĕнекисемпе, пособийĕсемпе тивĕçтерме 500 миллион тенкĕ укçа кайнă. Кăçалхи çур çулта вĕренӳ тытăмĕ валли республика шайĕнче 7499,8 миллион тенкĕ уйăрнă. Çакă – уйччечхи çулхи шайăн 114,6 проценчĕ. Çав укçапа пĕлӳ çурчĕсене реконструкцилене, вĕсен ĕç-хĕлне тивĕçтернĕ, шкул умĕнхи вĕренӳ учреждениййĕсенче ĕçлекенсен шатерĕç ветерансем.

Ĕç ушкăнĕ Çатракасси шкулне çитрĕ. Кунти ĕçхĕлпе асăннă шкул ертӳçи Виталий Прокопьев паллаштарчĕ.

– Иртнĕ çул пĕрремĕш класа вунă ача килнĕ пулсан, кăçал вĕсен йышĕ çирĕмрен иртмелле. Ĕçлеме те, вĕренме те условисем пур, хальлĕхе вара канализаци çукки чăрмав кӳрет, – палăртрĕ хăйĕн шухăшне Виталий Александрович.

Вĕренӳ ĕçĕн пĕтĕмĕшле ма пуçларĕç. Кулленхи ĕçре пысăк опыт пухнă ветерансем вĕренӳ учреждениййĕсене те килни питĕ лайăх. Сирĕн сĕнĕвĕрсем, вĕрентĕвĕрсем пире яланах кирлĕ, – палăртрĕ хăй шухăшне Антонина Владимировна.

Делегацин ĕç кунĕ асăннă шкулта вĕçленчĕ. Вĕренӳ сферинчи лару-тăрупа район администрацийĕн вĕренӳпе çамрăксен политикин пайĕн ертӳçин çумĕ Ирина Ершова паллаштарчĕ. Вĕренӳ учреждениййĕсем ачасене йышăнма



лăвне ӳстернĕ тата ытти тĕллевпе усă курнă.

Çакă тата ытти ĕç вырăнсенче епле вăя кĕнипе, вĕренӳ учреждениййĕсем çĕнĕ вĕренӳ çулне мĕнле хатĕрленсе çитнипе паллашма çула тухрĕ районти ветерансен пĕр ушкăнĕ, вăл шутра пенсионерсен пĕрлĕхĕн, АПК ветеранĕсен канашĕн тата ветерансен канашĕн членĕсем. Хисеплĕ ветерансенчен тăракан сумлă делегаци чи малтанах Муркаш шкулĕнче пулчĕ. Вĕсене асăннă шкул ертӳçи Николай Смирнов кĕтсе илчĕ, самантпа усă курса лару-тăрупа паллаштарчĕ.

– Пĕтĕмĕшле илсен хамăр шайри мĕн пур ĕç-хĕле шайлаштарма тăрăшатпăр. Çĕнĕ вĕренӳ çулне малтанласа палăртнă тăрăх 773 ача килмелле. Пĕрремĕш класрисен йышĕ 100-е яхăн. Паянхи пурнăç профиль вĕренĕвĕ питĕ кирлине çирĕплетет, ку енĕпе эпир тимлетпĕр. Ача хăй кăмăлланă ĕç вĕренĕвне шкулта чухнех суйлатăр. Çавăн пекех кадет класĕсем те питĕ пултарулла, республика шайĕнче те вĕсем ырă тĕслĕхре, – терĕ Николай Евгеньевич.

Ачасем кунта терминал урлă электрон карттăпа апатланаççĕ. Унпа усă курни пур енлĕ меллĕ, ача чăннипех те апатланни пирки ашшĕамăшĕн телефонĕ çине пĕлтерӳ каять.

– Вĕренӳре малта пыракан ачасемпе ĕçлесси питĕ кирлĕ. Эсир ку енĕпе ĕçлесе пыни питĕ савăнтарать. Аслă ăру шанăçне эсир тӳрре кăларасса эпир шанатпăр, – хаклавĕпе асăннă шкул вăтам шайра. Классем пур енлĕ хăтлă, информаци тĕлĕшĕнчен пуян, ахальтен мар ĕнтĕ чăваш чĕлхи пӳлĕмĕ конкурсра та çĕнтерӳçĕсен йышĕнче палăрнă.

Ветерансем ку шкул коллективĕн ĕçлес вăй-хăвачĕ тата кăмăлĕ пуррине палăртрĕç. Стендри кивелнĕ информацие çĕннипе улăштармалли пирки те асăнса хăварчĕç. Ăста хут купăсçăсем хатĕрлессипе малашне те ĕçлеме сĕнчĕç ветерансем.

Çул çӳрев Очăкассинчи пуçламăш шкул-ача садне илсе çитерчĕ. Хăй вăхăтĕнче ку çурт-йĕр йывăр лару-тăрура пулнă, район ертӳлĕхĕ çине тăнипе ăна хăтлăх кĕртнĕ. Куллен пурнăçламалли ĕç вара тупăнсах тăрать.

Пысăк йыш çитнĕ вăхăтра Тивĕшри 29 номерлĕ "Незабудка" ача сачĕн ертӳçи Вера Федорова картишĕнчеччĕ. Ку объектра хăй вăхăтĕнче 190 ытла ача вĕреннĕ, кунтах республика шайĕнчи ăмăртусем тата ытти ĕç иртнĕ, тахçантан пыракан традицисем пулнă. Вăхăчĕ çапла килсе тухнă, учреждени ĕçне улăштарма тивнĕ. Халĕ ку ача сачĕ, çакăнта çӳрекенсем 20-ĕн, 12-шĕ талăкĕпех кунта пурăнать, кӳршĕри районсенчен те килеççĕ.

Шетмĕпуç шкулĕнче хăтлăх хуçаланать, классем çутă, сĕтел-пукан лайăх.

– Ашшĕ-амăшĕпе шкул тачă çыхăнура. Вĕренӳ ĕçĕ çине патшалăх шайĕнче чăннипех те пысăк тимлĕх уйăрхатĕр: юсав ĕçĕсем иртнернĕ, вĕренӳ пособийĕсене туяннă, оборудовани çĕнетнĕ тата ытти те. Вырăнти бюджетран çĕнĕ вĕренӳ çулне хатĕрленме 14931,1 пин тенкĕ уйăрнă. Унпа кантăк, алăк блокĕсем, электроснабжени системипе çутă улăштарнă, юсав ĕçĕсем иртнернĕ. Ялти шкулсенче вĕренекенсем валли спортзалсенчи условие лайăхлатма федераци бюджетĕнчен 839 пин тенкĕ уйăрнă. Асăннă укçапа Ярапайкасси шкулĕн спортзалĕнче капиталлă юсав ĕçĕ иртерме тата спорт инвентарĕ туянма усă кураççĕ. 2011 – 2015 çулсенчи "Доступная среда" федераци программи шайĕнче районти Мăн Сĕнтĕрти вĕренӳ учрежденийĕ валли 1652375 тенкĕ уйăрнă. Çавăн пекех "Золушка" ача садĕнче хушма ушкăн уçма федераци бюджетĕнчен 2 миллион тенкĕ куçарнă.

Çак кунах ветерансем йăлана кĕнĕ "Аслă ăрăва – чыс та мухтав" уйăхлăхне иртересси пирки калаçнă. Вăл ытти чухнехи пекех сентябрĕн 15-мĕшĕнчен пуçласа октябрĕн 15-мĕшĕччен пырĕ. Уйăхлăх планĕпе районти пенсионерсен канашĕн ертӳçи Алексей Скворцов паллаштарчĕ. Унăн шайĕнче пĕрлехи канашлусем иртермелле, йышăнусене ял тăрăхĕсене çитермелле, вĕренӳ учреждениййĕсенче тĕл пулусем иртермелле тата ытти ĕç пурнăçламалла. Палăртса хăварас килет, аслă ăрăва тимлĕх уйăрасси пĕр уйăхпа кăна чикĕленмест.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**

# Хăрушсăрлăх – тĕп вырăнта

Хресчен пурнăçĕнчи чи хĕрӳ ĕç çи тапхăрĕ. Çак вăхăтра, паллах, тракторсемпе вĕсен прицепĕсемсĕр, хăй тĕллĕн çӳрекен ытти техникăсăр ĕççене агротехника ыйтнă пахалăхпа вăхăтра пурнăçлама çук. Çакна курса-пĕлсе тăраканăн ку вăхăтра асăрханулăх пирки те манма юрамасть. Ĕççене халăх йышлă хутшăннă чух çакă уйрăмах пĕлтерĕшлĕ.

Республикăра çулленех "Трактор" профилактика уйăхлăх-операци иртереççĕ. Кăçал та вăл авăн уйăхĕн 1-мĕшĕччен пырать. Анчах çакă тракторпа ĕçленĕ чух хăрушсăрлăх ыйтăвне пăхасси пĕр уйăхпа çеç çыхăннине пĕлтермест.

"Трактор" операци пырать



Иртнĕ кĕçнерни кун "Трактор" уйăхлăх-операци планĕпе килĕшӳллĕн Турай, Муркаш, Оринин, Москакасси, Мăн Сĕнтĕр, Ильинка ял тăрăхĕсенче профилактика тĕрĕслевĕ иртертĕмĕр. Çынсен тата предприяти-организацисен харпăрлăхĕнчи тракторсемпе прицепсем тата хăй тĕллĕн çӳрекен ытти техника тĕлĕшпе уйрăм тимлĕх пулчĕ. Тĕрĕслевсем вăхăтĕнче техникăна техосмотр тăратнине пăхасси, юсавсăр тата учета тăратман техникăпа ĕçе тухнине палăртасси, усă куракан техника тăван тавралăха сыхламалли требованисене, пушар хăрушсăрлăхне пăхăнни тĕп вырăнта пулчĕ.

Рейд вăхăтĕнче тĕрлĕ харпăрлăхри 12 трактора тĕрĕслеме тӳр килчĕ. Вĕсен пĕр пайĕ хăрушсăрлăх йĕркине пăхăнманнине тупса палăртрăмăр.

Токшик уйĕнче ĕçлекен А. Степановăн МТЗ-82 тракторне тĕрĕслесен унăн двигателе передача çинче ĕçлеттерсе яма чаракан механизм çукки палăрчĕ. 300 тенкĕ административлă айăплав çак çитменлĕхе пĕтерме пулăшĕши? Çав вăхăтрах Москакасси ял тăрăхĕнче тĕрĕслев серепине лекнĕ Н. Терентьев медаптечка тата огнетушительпе аварилĕ чару паллине çав кунах трактор çине вырнаçтарассине ĕненмеллех шантарчĕ **(сăн ӳкерчĕкре).** "300 тенкĕ вăхăтлă асăрхаттару пулнине ĕненетĕп. Паянах вĕсене туянса хуратăп", – терĕ вăл административлă айăплав протоколне алла илнĕ май.

Ку тĕрĕслевре хăйсен айăпĕсене ăнланакан ытларах пулни Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕнче те тĕл пулчĕ. Д. Федоров Китайра кăларнă пĕчĕк трактора вăхăтра регистрацилеме "маннишĕн" 1500 тенкĕ "премие" тивĕçрĕ. Çитменлĕхе çывăх вăхăтрах тӳрлетме шантарчĕ вăл. Сăмахне тытĕши? Пурăнăпăр – курăпăр.

Ильинка ял тăрăхĕнчи М. Яшмолкин пенсионер тĕрĕслевре палăрнă çитменлĕхсене вырăнтах пĕтерни механизаторсем хушшинче те яваплăха туякансем пуррине кăтартрĕ.

Ĕçлеме тухнă техника çинчи çитменлĕхсем хыçĕнче çынсен пурнăçĕ тăни кашниншĕнех паллă. Ăна шута илсе айăплисене çирĕп явап тыттарни çеç çителĕксĕр. Çак айăплава механизаторсем хăйсем ăнланса илни пĕлтерĕшлĕ.

Тĕрĕслевсем малалла пыраççĕ.

**Рейд ушкăнĕ:**

**С. НИКОЛАЕВ, ЧР Гостехнадзорăн районти аслă инспекторĕ;**

**А. БЕЛОВ, район хаçачĕн экономика пайĕн ертӳçи.**

Вырма – 2014

# "Йывăрлăхсене пĕрле çĕнмелле"




Çакнашкал девизпа вăй хураççĕ паян хăйсен хирĕсемпе йĕтемĕсем çинче Шетмĕпуç ял тăрăхĕнчи çĕр ĕçченĕсем. Ку сăмахсене вĕсем вырăнта кулленех ĕçпе çирĕплетсе пыраççĕ. Çакăнта вырăнти хресченсемпе культура ĕçченĕсем пĕр çемьери пек тăрăшни те кĕр мăнтăрĕпе туллин усă курма пулăшать.

Уй-хирти хĕрӳ ĕç çире асăннă тăрăхри ял хуçалăх производство кооперативĕ, агрофирма, хресчен (фермер) хуçалăхĕсем, уйрăм çынсем çитес хĕл кунĕсене хатĕрленсе тăрăшсах выльăх апачĕ хатĕрлеççĕ. Çав хушăрах пĕтĕм вăй-халпа тыр-пул пуссинче вырма иртереççĕ. Пĕрлехи тăрăшулăх çимĕç те парать: кĕлетсене тонна хыççăн тонна çĕнĕ «çăкăр» кĕрет.

Иртнĕ кунсенче эпир агитбригада ушкăнĕпе Шетмĕпуç ял тăрăхĕнче ĕçлекен хуçалăхсене унти ĕçченсене ташă-юрăпа савăнтарас тĕллевпе çула тухрăмăр. Хамăр ума лартнă тĕллеве пурнăçларăмăр тетпĕр.

Малтанах пирĕн ушкăн "Колос" АПФ ĕçченĕсемпе тĕл пулу иртерчĕ. Кунти ĕççем калкал пырасси çине пирĕн сăвă-юрăсем те витĕм кӳрессе çĕнĕ «çăкăр» пуçтарса кĕртессипе иртен пуçласа сĕм тĕттĕмччен ĕçлекенсем пĕр çын пек çирĕплетрĕç. Вырма вĕçлениччен татах килсе курма сĕннине те эпир йышăнтăмăр.

Унтан пирĕн ушкăн Мичурин ячĕпе хисепленекен агрофирмăна çитрĕ. Кунта та паян уяр кунăн кашни сехечĕпе туллин усă курассишĕн ĕççем пыраççĕ. Савăк ташă-юрăпа савăнтарнă хушăрах хамăр енчен эпир вĕсене ума лартнă тĕллевсене туллин пурнăçлама сывлăх, ăнăçу, вăй-хал сунтăмăр.

Пирĕн юрăсемпе шӳтсем тата район шайĕнчи хыпарсем В. Горбунов хресчен (фермер) хуçалăхĕн ĕçченĕсемшĕн те вăхăтлă пулчĕç тесе шутлатпăр. Кунта паян тыр-пул пуçтарса кĕртессипе ĕçленипе пĕрлех выльăх-чĕрлĕхе хĕл каçармалăх выльăх апачĕ ытлă-çитлĕ янтăлассипе те çанă тавăрсах ĕçлеççĕ. Хамăрăн ташă-юрă номерĕсене вĕсене тĕллевĕсене ăнăçлă пурнăçлама халалларăмăр.

Пур коллектива çитсен те пирĕн хутшăну туслăх шайĕнче иртрĕ. Ĕçлекенсем хамăра хавас пулни пире те пуçаруллăрах пулма хавхалантарчĕ. Эпир те уй-хир ĕçченĕсене кĕрхи ĕççем вĕçленсен Шетмĕпуçĕнчи информаципе культура центрне пирĕнпе çĕнĕ юрăсем вĕренме, пĕрле сцена çине тухма йыхравласа хăвартăмăр.

**В. СЕРГЕЕВ,**
**Шетмĕпуçĕнчи информаципе культура центрĕн ертӳçи.**
**Автор сăн ӳкерчĕкĕ.**

# Ку ыйту та тимлĕх ыйтать

## Сăмах – специалиста

Вилнĕ выльăх юлашкисем çĕрме тытăнни чир тухас хăрушлăх кăларса тăратнине кашни ăнланма тивĕç. Анчах та выльăх-чĕрлĕхе пуснă хыççăн вĕсен шăммине, пуçне, урине, пыршипе ăшчиккине, тирне ферма территорийĕнче е çырма-шăтăкра, е вăрманта пăрахса хăварнă тĕслĕх сахал мар.

Акă пĕлтĕр Россельхознадзорăн республикăри управленийĕн инспекторĕсем тĕрĕслев вăхăтĕнче Елчĕкри пĕр хуçалăхăн ферма территорийĕнче сыснасен виллисене уçă вырăнта асăрханă. Кунашкал йĕркесĕрлĕхшĕн ял хуçалăх предприятине 3 пин тенкĕлĕх штрафланă.

Сăмах май, çакăншăн председателе паянхи кун 20 пинрен пуçласа 40 пин тенкĕ таран штрафланă пулĕччĕç. Асăннă хуçалăхра инспекторсем çулталăк пуçламăшĕнче пулнă, август уйăхĕнче вара штрафсен виçине палăрмаллах ӳстерчĕç. Çакăншăн предпринимательсенчен 40–50, юридици сăпатĕнчи çынсенчен 500–700 пин тенкĕ таранах штраф шыраса илме пултараççĕ.

Патăрьел районĕнче вара Пăлапуç Пашьел салинчен 2 çухрăмра вырнаçнă вăрманта био-юлашкисен (кунта чĕр чунсен тата кайăксен виллисене, вилĕ çуралнисене, ветеринари конфискачĕсене тата ыттине кĕртеççĕ) купи пирки пĕлтерчĕç. Унта, чăнах та, мăйракаллă шултра выльăхăн çĕрме тытăннă пуçĕсем, шăммисем, урисем йăваланса выртнă. Инфекци чирĕсем пуррине палăртма пробăсем илнĕ паллах. Уйрăмах хăрушă амак паллисем пулманнине лаборатори тĕпчевĕсем çирĕплетнĕ хыççăн районти ветстанци ĕçченĕсем купана утилизацилесси енĕпе мероприятисем йĕркеленĕ. Самай пысăк купана тĕп тума тивнĕ пулин те, никама та явап тыттарма май килмен. Хуçине тупса палăртайман. Био-юлашкисене ятарлă машинăсемпе Çĕрпӳри ветсанутильзавода илсе кайнă.

Палăртмалла, çак завод республикăра био-юлашкисене утилизацилекен пĕртен-пĕр завод. Эппин унти ĕçченсем чир-чĕр тухассине тата сарăлассине сирес енĕпе пысăк ĕç пурнăçлаççĕ. Вăл 1978 çултанпа ĕçлет. Унччен выльăх виллисене ятарлă вырăнсенче (выльăх масарĕ е био-шăтăксенче) утилизациленĕ. Чăваш Республикинче 830 выльăх масарĕ шутланса тăрать, вĕсенчен 398-шĕ – Çĕпĕр язвипе чирленĕ выльăха пытарнисем. Асăрхăр, вĕсем пурте хупă, унта пытарма кăна мар, нимĕнле çĕр ĕçĕ те пурнăçлама юрамасть. Кĕтӳ çӳретме чарнине те манар мар.

Завод вара чĕр чунсем мĕнле сăлтавпа вилнине пăхса тăмасăр юлашкисене йышăнать. Çавăнпа та вĕсене тирпейленĕ тата утилизациленĕ чухне ветеринарипе санитари правилисене питĕ çирĕп пăхăнмалла. Анчах та заводра çитменлĕхсем куçа тăрăннă.

Завода реконструкци тунисĕр, тасатакан сооруженисене тата производство пӳлĕмĕсене юсаса тĕпрен çĕнетнисĕр, территорие хăтлăх кĕртнисĕр пуçне паянхи кунпа килĕшсе тăракан техникăпа тивĕçтерес ыйту çивĕч тухса тăрать.

Республикăшăн завод, чăнах та, пысăк пĕлтерĕшлĕ ветеринари объекчĕ пулнă май, асăннă çитменлĕхсене пĕтерме укçа-тенкĕ уйăрасса шанас килет. Шанăç пирки сăмаха пушă вырăнтан пуçармаççĕ темелле. Республикăра 2013–2020 çулсенче ял хуçалăхне аталантарасси пирки калакан программăна "Чăваш Республикинче ветеринарие аталантарасси" текен çум программа кĕртнĕ. Унта вара бюджет çинчи ветеринари учрежденийĕсен пурлăхпа техника базине тĕревлетессипе, Чăваш Республикин Патшалăх ветеринари службин учрежденийĕсене хальхи вăхăтпа килĕшсе тăракан ветеринари оборудованийĕпе пуянлатассипе çыхăннă мероприятисем пирки калани пур. Асăннă завод шăпах Патветслужбăна пăхăнса тăрать.

Выльăх-чĕрлĕх хуçисене çак самантсене асра тытма сĕнес килет: выльăх вилсен талăк хушшинче вырăнти ветеринари специалистне пĕлтермелле. Вăл ăна утилизацилемеллине е тĕп тумаллине палăртать.

Кун пирки пĕлтерменнишĕн административлă майпа явап тыттарни пирки ан манăр.

**Н. ЕМЕЛЬЯНОВА,**
**управленин чикĕри ветеринари контролĕн пайĕн пуçлăхĕ.**

## Пĕлтерӳсем. Объявления


В магазине «Стройхозтовары» Моргаушского райпо – ПРАЗДНИЧНАЯ АКЦИЯ! 2-3.
Кирпич силикатный желтый М150 по цене 19 руб./шт.
Кирпич керамический полуторный М150 по цене 17 руб./шт.
Возможна доставка кран-манипулятором.
Адрес: с. Моргауши, ул. Мира, д. 23. Тел.: 62-0-36.

ВИКТОРИЯ–ОКНА
Пластиковые окна – 7-ое окно в подарок.
Натяжные потолки – 4-ый потолок в подарок.
Металлические двери – глазок и замок в подарок.
От производителя. Адрес: с. Моргауши, ул. Гагарина, 16Б.
Тел.: 8-987-662-61-62, 8-937-955-33-00. 10-10.


КТО ЗНАЕТ СЧЕТ ДЕНЬГАМ И ВРЕМЕНИ – ТОТ ВОВРЕМЯ ДЕЛАЕТ ПОКУПКИ!
В преддверии нового учебного года проводится акция по займам
«НА ПОДГОТОВКУ К ШКОЛЕ»
*Акция действует с 15 июля по 30 сентября 2014 года.*
Подробнее об условиях в офисах кооператива по тел.
62-6-86, 8-900-333-0001
Кредитный потребительский кооператив “Содружество”
с.Моргауши, ул.50 лет Октября, 23
5-6. СОДРУЖЕСТВО *для пайщиков кооператива*

Продаю ПЕСОК, ГРАВМАССУ от 10 до 15 тонн. Доставка. Тел.: 8-903-065-60-58. 57-68.

ТРЕБУЮТСЯ ОХРАННИКИ 4 РАЗРЯДА ДЛЯ РАБОТЫ В МОРГАУШСКОМ РАЙОНЕ.
Тел.: 8-937-955-77-57. Дмитрий. 1-2.

СТРОЙМАТЕРИАЛЫ. Продаю с доставкой: кирпич керамический, силикатный (любых цветов); блоки керамзитобетонные, газосиликатные, фундаментные, пеноблоки; кольца колодезные; трубы асбестоцементные, профильные; арматуру, цемент; сухие смеси, шифер, рубероид, профнастил, пиломатериалы. Металлоконструкции: гаражные ворота, калитку, забор, беседку, теплицу, козырьки (навесы), решетки, кладочные сетки, банные печи, мангал, скамейки и т.п. Услуги крана-манипулятора. Тел.: 8-965-68-111-55, 8-937-01-04-222. 7-10.

* * *

Организация реализует: гравмассу (ОПГС), щебень различных фракций. Без посредников. Низкие цены. Шешкарская пристань, Моргаушский район. Тел.: 8-927-995-07-51, 8-937-384-06-50. 9-28.

* * *

Продаем керамблоки, гравмассу, цемент, кирпич, ж/б изделия. Услуги манипулятора.
Тел.: 8-903-389-90-38. 3-8.

* * *

Декабрь уйăхĕнче пиллĕкмĕш пăруламалли хура ĕне тата февраль уйăхĕнче пăруламалли хĕрлĕ тынашки сутатпăр. Тел.: 8-937-393-17-05. 2-2.

* * *

Сĕлĕ сутатăп. Тел.: 8-905-344-75-90.

* * *

Январь уйăхĕнче пăруламалли тынашки сутатпăр. Тел.: 8-927-860-15-55.

* * *

Требуется продавец в магазин стройхозтовары «У Вадима» на территории Моргаушского рынка.
Тел.: 8-927-846-73-91.

* * *

Качака такисем, качакасем, качака путеккисем (декабрь уйăхĕнче пăранламалла) сутатăп.
Тел.: 8-953-017-00-51.

* * *


ИЗВЕЩЕНИЕ О СОГЛАСОВАНИИ ПРОЕКТА МЕЖЕВАНИЯ ЗЕМЕЛЬНЫХ УЧАСТКОВ

Настоящим извещением уведомляем участников долевой собственности на земельный участок с кадастровым номером 21:17:080901:2, о месте и порядке ознакомления с проектом межевания земельного участка, образованного в счет земельной доли. Предметом согласования являются размер и местоположение границ выделяемого земельного участка.

Заказчиками проекта межевания являются: Маряшкина Галина Михайловна, проживающая по адресу: Россия, Чувашская Республика, Моргаушский район, Юнгинское сельское поселение, с. Юнга, ул. Зеленая, д. 85. Маряшкин Юрий Тимофеевич, проживающий по адресу: Россия, Чувашская Республика, Моргаушский район, Юнгинское сельское поселение, с. Юнга, ул. Центральная, д. 35, кв. 4. Горланова Надежда Владимировна, проживающая по адресу: Россия, Чувашская Республика, Вурнарский район, д. Отары, ул. Лесная, д. 27. Козлова Агния Федоровна, проживающая по адресу: Россия, Чувашская Республика, Моргаушский район, Юнгинское сельское поселение, д. Сярмыськасы, ул. Мира, д. 50. Терентьев Николай Вениаминович, проживающий по адресу: Россия, Чувашская Республика, г. Чебоксары, бульвар Миттова, д. 39, кв. 11. Терентьева Римма Алипиевна, проживающая по адресу: Россия, Чувашская Республика, Моргаушский район, Юнгинское сельское поселение, д. Кубасы, ул. Школьная, д. 12. Савельева Валентина Егоровна, проживающая по адресу: Россия, Чувашская Республика, Моргаушский район, Юнгинское сельское поселение, д. Кубасы, ул. Нижняя, д. 83. Фомина Юлия Ивановна, проживающая по адресу: Россия, Чувашская Республика, Моргаушский район, Юнгинское сельское поселение, д. Кубасы, ул. Нижняя, д. 121. Егорова Агафия Петровна, проживающая по адресу: Россия, Чувашская Республика, Моргаушский район, Юнгинское сельское поселение, д. Кубасы, ул. Нижняя, д. 73. Любимов Порфирий Никифорович, проживающий по адресу: Россия, Чувашская Республика, Моргаушский район, Юнгинское сельское поселение, с. Юнга, ул. Яргунеки, д. 39.

Проект межевания земельного участка подготовлен кадастровым инженером Кольцовым А.В., номер квалификационного аттестата 21-11-27. Почтовый адрес и адрес электронной почты, по которым осуществляется связь с кадастровым инженером: 429530, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5. E-mail:arshin21@yandex.ru

Кадастровый номер исходного земельного участка 21:17:080901:2. Адрес местоположения: Чувашская Республика-Чувашия, Моргаушский район, Юнгинское сельское поселение.

С проектом межевания земельного участка можно ознакомиться по адресу: 429530, Россия, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5.

Обоснованные возражения после ознакомления с проектом межевания относительно размера и местоположения границ земельного участка принимаются в течение 30 дней со дня опубликования данного извещения по адресу: 429530, Чувашская Республика-Чувашия, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5, ООО «Аршин» и в филиале ФГБУ «ФКП Росреестра» по Чувашской Республике-Чувашии, по адресу: Чувашская Республика-Чувашия, г. Чебоксары, пр. Московский, д. 37.


СПУТНИКОВЫЕ АНТЕННЫ ТРИКОЛОР. ТЕЛЕКАРТА - от 3000 руб. ОБМЕН. ГАРАНТИЯ.
Тел.: 8-905-345-77-19. 8-20.

Продаем: доски 25–50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Цена договорная, доставка по району бесплатно.
Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-679-18-11. 3-10.


ДНИ ОПТОВЫХ ЦЕН
Мультиварка SHIVAKI SMC-8351
Мощность 860 Вт
Объем 5 л
Тефлоновое покрытие чаши
12 автоматических программ
Поддержание тепла
990 руб.
9-10.
БЫТОВАЯ ТЕХНИКА Лидер
ВСЕГДА НИЗКИЕ ЦЕНЫ
МОРГАУШИ
ул. 50 лет Октября, 4
*тел.: 6-23-80*
Цена действительна с 15 по 31 августа.

Киевлнĕ электропроводка – пушар хăрушлăхĕ, кайран вара чавса çывăх та çыртма çук. Ялти çуртсенче, хваттерсенче кивелнĕ электропроводкăна, счетчиксене çĕнĕрен улăштаратпăр. Материалĕ хаклă мар.
Тел.: 8-902-661-70-57, 8-937-015-35-40, 62-1-37. 2-10.

ПРОДАЕМ ПИЛОМАТЕРИАЛЫ ОБРЕЗНЫЕ: 25х100; 25х110; 25х120; 25х130; 25х150; 25х200; 50х120; 50х150; 50х180; 50х200. БРУСЬЯ: 100х100; 100х150; 100х200; 150х150; 150х200. БЛОКИ, КИРПИЧИ, ЦЕМЕНТ.
Тел.: 8-903-346-40-58, 8-905-346-63-36. 8-10.

НАТЯЖНЫЕ ПОТОЛКИ
Тел.: 8-927-667-40-92. 7-15.

Консалтинговая компания «ВИКТОРИЯ»
* Представительство интересов в судах;
* Подготовка исков, договоров, жалоб;
* Сделки с недвижимостью, в т.ч. с земельными участками;
* Услуги по оценке недвижимости;
* Взыскание по КАСКО, ОСАГО;
* Регистрация, ликвидация организаций, ИП;
* Бухгалтерский и кадровый учет.
Адрес: с. Моргауши, ул. Мира, д. 6, офис 119
Тел.: 62-4-43, сот. 8-903-358-64-48
г. Чебоксары, ул. Водопроводная, д. 22. Тел. 44-64-48
сайт: www.victoria-ooo.ru

Продаю земельный участок на республиканской трассе в д. Нискасы площадью 18 соток для строительства зданий и сооружений. Тел.: 446-448.

3-10. компания немецкие ОКНА И ДВЕРИ
• замер • доставка (бесплатно)
• установка под ключ
8(927)844-78-11
всего от 2900 руб. кв.м.

Моргаушское райпо предоставляет услуги по изготовлению дубликатов ключей (квартирных, домофонных, автомобильных и т. д.), по заточке кухонного, сельскохозяйственного и столярного инвентаря, по отбивке лезвия косы.
Обращаться по адресу: с. Моргауши, ул. 50 лет Октября, д. 4 (здание Дома быта, 1 этаж).
Тел.: 8-937-379-15-35. 1-3.

СПУТНИКОВЫЕ АНТЕННЫ. АКЦИЯ!!! Снижение цен! ТРИКОЛОР, ТЕЛЕКАРТА от 3000 руб. Обмен старых приемников на новые + поправка антенны бесплатно! Дилер, установщик по району. Тел.: 8-906-385-29-30. 8-10.


## Прогноз погоды

| | среда 27 августа | | | | четверг 28 августа | | | | пятница 29 августа | | | | суббота 30 августа | | | | воскресенье 31 августа | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| Местное время | 04 | 10 | 16 | 22 | 04 | 10 | 16 | 22 | 04 | 10 | 16 | 22 | 04 | 10 | 16 | 22 | 04 | 10 | 16 |
| Облачность, % | | | | | | | | | | | | | | | | | | | |
| Осадки, мм | | | | | | | | | | | | | | | | | | | |
| Температура, °С | **+12** | **+17** | **+18** | **+14** | **+14** | **+13** | **+14** | **+14** | **+15** | **+15** | **+18** | **+14** | **+12** | **+15** | **+17** | **+13** | **+11** | **+13** | **+15** |
| Давление, мм | 745 | 745 | 744 | 742 | 741 | 741 | 740 | 737 | **732** | **728** | 737 | 740 | 741 | 742 | 742 | 743 | 744 | 745 | 745 |
| Влажность, % | 80 | 64 | 49 | 66 | 82 | **97** | **94** | 84 | **91** | **96** | 62 | 71 | 88 | 78 | 63 | 71 | 86 | 88 | 71 |
| Ветер, м/с | 4 | 2 | 4 | 4 | 5 | 5 | 4 | 2 | 4 | 5 | 8 | 5 | 4 | 4 | 5 | 5 | 4 | 3 | 3 |
| | Ю-З | Ю-З | Ю-З | Ю-В | Ю | Ю | Ю | Ю | В | З | З | Ю-З | Ю-З | З | З | З | З | З | С-З |
| Солнце восход / заход | | 05:48 | 20:00 | | | 05:50 | 19:57 | | | 05:52 | 19:55 | | | 05:54 | 19:52 | | 05:56 | 19:50 | |
| Луна восход / заход | | 07:48 | 20:10 | | | 08:56 | 20:30 | | | 10:05 | 20:50 | | | 11:14 | 21:14 | | 12:24 | 21:42 | |

## Тав тăватпăр

Турай ял тăрăхĕнчи Кĕçĕн Чураш ялĕнче пурăннă, нумай çул Турай больницинче тĕп врачра ĕçленĕ Владимир Григорьевич Майорова юлашки çула ăсатма пулăшнăшăн, йывăр хуйха пирĕнпе пĕрле пайланăшăн Муркашри тата Турайри больница коллективĕсене, Турай ял администрацине, тăвансене, ял-йыша, унпа сыв пуллашма пынă мĕн пур çынна чĕререн тав тăватпăр.

**Майоровсем, Саватеевсем.**


Муркаш районĕнчи «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат
УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:
Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви
ЧР Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин “Муркаш районĕн «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕ” Чăваш Республикин хай тытăмлă учрежденийĕ.

Тĕп редакторшăн В.Л. ШАПОШНИКОВ.
Редакципе издатель адресĕ: 429530, Чăваш Республики, Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 9А çурт.
ТЕЛЕФОНСЕМ: тĕп редактор - 62-1-36, бухгалтери - 62-1-35,
пайсем: общество пурнăç пайĕ - 62-2-82, экономика тата социаллă пурнăç пайĕсем - 62-1-38.
Факс: 62-1-36; E-mail: morpress@cbx.ru, redaction@cbx.ru
Çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникаци сферине пăхса тăракан Федераллă службăн Чăваш Республикипе – Чăваш Енпе ĕçлекен управленийĕ 2012 çулхи юпа уйăхĕн 11-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00249 № регистрациленĕ.

Калăпăшĕ 1,0 пичет листи.
Ал çырăвĕсене рецензилемеççĕ, каялла тавăрса памаççĕ, 2 страницăран пысăкраххисене йышăнмаççĕ.
Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.

ИЗДАНИ ИНДЕКСĔ: 54822.
Хаçат юн тата шăмат кунсерен тухать.
Номер дежурнăйĕ Макарова Р.А.
Пичете pană 26.08.2014 ç.
Пичете памалли вăхăт: графикпа – 17 сех. 20 мин, чăннипе – 17 сех. 20 мин.
Заказ Тираж 4659.

Номер набран и сверстан в АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.